Эсир ыйтнипе

# Мăн Сĕнтĕр пасарĕнче апат-çимĕç сутма чарнă. Мĕншĕн?

2007 çулхи февралĕн 25-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Роспотребнадзор управленийĕн территори пайĕн специалист-эксперчĕ Г.Г. Воробьева тата 1-мĕш разрядлă специалисчĕ С.Л. Алексеева Мăн Сĕнтĕр пасарĕнче санитарипе эпидемиологи ăнăçлăхĕ тĕлĕшпе тата потребительсен прависене хӳтĕлессипе Раççей Федерацийĕн законодательствине мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслев вăхăтĕнче çак çитменлĕхсене тупса палăртнă:

– суту-илӳ организацийĕн пасарта сутакан продукци ассортименчĕн санитарипе норматив правилисем пирки санитарипе эпидемиологи заключенийĕ çук, апат-çимĕç продукчĕсене йышăнма, усрама тата сутма кирлĕ условисем туса паман, сутуçăсем хăйсен гигиенин правилисене пурнăçламаççĕ;

– пасарта вĕри тата сивĕ шыв парса тăрассине йĕркелемен;

– канализаци çук;

– сутă тăвакансем валли алă çума раковина çук;

– хăвăрт пăсăлакан апат-çимĕç продукчĕсене (кăлпасси, сыр, сĕт-çу, аш-какай, пулă изделийĕсем) холодильниксенче упрамаççĕ;

– аш-пăш, пулă чĕртаварне кăлпасси, сыр, çу продукчĕсемпе пĕрле пĕр сĕтел çинченех сутаççĕ, пĕр виçев приборĕпех виçсе параççĕ;

– апат-çимĕç продукчĕсене уçă вырăнта сутнă çĕрте кăшлакан чĕрчунсем пырса кĕрес хăрушлăх пур;

– суту-илӳ сĕтелĕсен тата лотоксен гигиена çивиттийĕ çук;

– аш ваклассине суту-илĕвĕн уçă площадкинчех йĕркеленĕ.

Санитарипе эпидемиологи законодательствин требованийĕсене пăснин çак тĕслĕхĕсене 2007 çулхи февралĕн 26-мĕшĕнче çырнă 53 № протоколра çутатнă.

Çĕнĕ Шупашкар хулин, Муркаш, Шупашкар, Етĕрне районĕсен 2007 çулхи мартăн 2-мĕшĕнчи патшалăхăн тĕп санитари врачĕн йышăнăвĕпе административлă правăна пăснă пирки пăхса тухма йышăнăва Муркаш район судне ярса панă.

Çынсен санитарипе эпидемиологи тĕлĕшĕнчи йĕркелĕхне тивĕçтерменнишĕн, санитари тата гигиена нормативĕсене пурнăçламаннишĕн вара саккунпа юридици вăйĕнчи çынсене ĕç укçин чи пĕчĕк шайĕн 100 хут виçинчен пуçласа 200 хут пысăклатнă виçи таран штраф пама е ĕç-хĕле административлă майпа 90 кун таран чарса лартма пăхнă.

1999 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче йышăннă «Çынсен санитарипе эпидемиологи тĕлĕшĕнчи ăнăçлăхĕ» 52 № Федераллă саккунăн 11 статйипе килĕшӳллĕн юридици вăйĕнчи çынсен санитари законодательствине пурнăçлассинчи тивĕçĕсене палăртнă. Унпа килĕшӳллĕн апат-çимĕç продукчĕсен, апат-çимĕçе яракан хушма япаласен, апат-çимĕç чĕртаварĕн тата ытти продуктсен вĕсене туса хатĕрленĕ, упранă, илсе килнĕ тата çынсене сутнă чухне санитари правилисене тивĕçтермелле. Граждансем, уйрăм предпринимательсем тата юридици вăйĕнчи çынсем те çак санитари правилисене пурнăçлама тивĕç.

Çапла вара Мăн Сĕнтĕр пасарĕ («Рынок «Моргаушский» МУП) çынсен санитарипе эпидемиологи тăнăçлăхне тивĕçтерессипе законодательство требованийĕсене пурнăçлама тивĕç.

Суд ларăвĕнче Роспотребнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕн территори пайĕн представителĕ Н.Ф. Луговская тупса палăртнă çитменлĕхсем çынсен пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратнине палăртнă, çавна май Мăн Сĕнтĕр пасарĕнче апат-çимĕç продукчĕсем сутма чарма ыйтнă.

«Рынок «Моргаушский» МУП директорĕ Е.Н. Субботин асăннă çитменлĕхсем чăннипех те пулнине çирĕплетнĕ, тĕрĕслев вăхăтĕнче тупса палăртнă çитменлĕхсене пĕтерессипе юлашки вăхăтра туса ирттерекен ĕçсем пирки каласа панă.

Суд йышăннă тăрăх, пасар ĕçĕ-хĕлĕнче çынсен сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратма пултаракан сăлтавсем чăннипех те пур. Сутăçăсене харпăр хăй гигиенине пурнăçлама майсем туса паман. Тĕрĕссипе вара ку майсене туса пама май пур. Çапла вара çак çитменлĕхсене пăхса тухса суд Мăн Сĕнтĕр пасарне апат-çимĕç продукчĕсем сутассипе 60 кунлăха хупма йышăннă. Ку сроксăр тупса палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме май çук.

Маларах Шупашкар районĕнчи Ишек пасарне 90 кунлăх тĕппипех хупрĕç. Апла пулсан пасарсенче те йĕрке тума вăхăт çитрĕ.

**Хамăр инф.**

## Михаил Семенович ВАСИЛЬЕВ



2007 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче 76 çула кайса Муркаш лицейĕнче математика учителĕ пулса ĕçленĕ М.С. Васильев вăхăтсăр вилсе кайрĕ. Хăйĕн пĕтĕм пурнăçне вăл çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парассине халалланă.

М.С. Васильев 1931 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Йӳтĕркасси ялĕнче çуралнă. Муркаш шкулĕнчен вĕренсе тухсан 1949 çулта Чăваш педагогика институтне вĕренме кĕнĕ.

Хăйĕн учитель ĕçне-хĕлне 1953 çулта Иркутск облаçĕнчи Черемково хулинчи 25-мĕш номерлĕ вăтам шкулта тытăннă. 1954 çулхи август уйăхĕнчен тытăнса 1961 çулхи декабрьччен Шупашкар районĕнчи Анат Кĕнерти шкулта ĕçленĕ: 1954 çулхи августран çав çулхи октябрьччен математика учителĕнче, 1954 çулхи октябрĕнчен 1958 çулхи сентябрьччен – вĕрентӳ пайĕн заведующийĕнче, 1958 çулхи сентябрьтенпе – шкул директорĕнче.

1961 çулхи декабрьтенпе ĕç биографине Муркаш районĕпе çыхăнтарнă. 1964 çулхи март уйăхĕччен Муркаш шкулĕн директорĕнче, хыççăн 1964-1968 çулсенче халăх вĕрентĕвĕн районти пайĕн ертӳçинче тăрăшнă. 1968 çулхи августран 1969 çулхи апрельччен – Муркаш шкулĕн математикăпа черчени учителĕ, 1969 çулхи апрельтен 1971 çулхи сентябрьччен – Муркаш шкулĕн директорĕ, 1971 çулхи сентябрьтенпе 1999 çулччен – Муркаш шкулĕн математика учителĕ. 2003 çулхи сентябрь уйăхĕнчен тытăнса Муркаш лицейĕнче математикăна вĕрентнĕ.

Михаил Семенович яланах обществăлла пурнăçа хастар хутшăннă. Ăна ĕç çынни депутачĕсен районти канашне депутата, райĕçтовком членне, Муркаш шкулĕн парти организацийĕн секретарьне суйланă.

Вĕрентӳ ĕçĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн ăна ЧР Вĕрентӳ министерствин Хисеп грамотипе, РСФСР Çут ĕç министерствин Хисеп грамотипе, çут ĕç, аслă шкул тата наука учрежденийĕсенче ĕçлекенсен республикăри профсоюз комитечĕн Хисеп грамотипе, «Хастар ĕçшĕн», В.И. Ленин 100 çул тултарнине халалласа кăларнă, «Ĕç ветеранĕ» медальсемпе наградăланă. Ăна «Учитель-методист» ят панă.

Михаил Семенович Васильевăн уçă сăнарĕ ăна пĕлекенсен асăнче яланах пулĕ.

**Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ; халăх вĕрентĕвĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн районти организацийĕн канашĕ.**

Милици хроники

## Асăрханăр, суя укçасем!

Пирĕн пурнăç тăтăшах тӳнтерле пулăмсемпе сăнланать. Ултав, суя вара малтан мала ăнтăлать. Акă, район территорийĕнче ултавлă укçасем алăран алăна çӳрени тĕл пулчĕ. Иртнĕ çул та палламан çынсем ялсенче суту-илӳ туса 1 пин тенкĕлĕх укçасем парса хăварнă 6 преступлени тупса палăртнăччĕ. Çавăнпа та çынсене тимлĕрех пулма ыйтасшăн. Енчен те ун йышши укçа сирĕн алăна лекрĕ пулсан, районти шалти ĕçсен пайне шăнкăравлама ыйтатпăр. Суя укçана улталас шухăшпа вăл е ку ĕçшĕн тӳлеме ан пикенĕр, çакă вăл саккуна хирĕç кайни пулать.

Акă, февралĕн 28-мĕшĕнче паллă мар çын Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче вырнаçнă “Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани” МУП кассине 1 пин тенкĕлĕх укçа тӳлесе хăварнă. Вăл 1997 çулта кăларнăскер, ОИ №5637308 сериллĕскер пулнă. Çапла вара организацие 1 пин тенкĕлĕх сиен кӳнĕ. Халĕ çакăн пирки РФ УК 186 статйипе уголовлăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Çавăн пекех Мăн Сĕнтĕр райповĕн Шупуç ялĕнчи куллен кирлĕ таварсен магазинĕнче ултавлă 1 пин тенкĕллĕ 2 укçана асăрхать сутуçă. Вĕсен серийĕсем çавăн пек: ОЗ №3865413, ИЛ №1443408.

Çавăнпа та пурин те асăрхануллăрах пуласчĕ, ултава аякка ямасăр çийĕнчех сирме тăрăшасчĕ.

## “Эрех çынна ăсран кăларать”, –

тесе ахаль каламаççĕ ĕнтĕ. Унăн усал туртăмне пурте лайăх ăнланатпăр пулин те, унпа кĕрешме мар, сарăлма май туса паратпăр.

Акă, Сентимĕр ялĕнчи 1943 çулта çуралнă кинемей спирт пур шĕвекпе саккуна пăсса суту-илӳ тума юраманнине пĕлсех çак ĕçпе аппаланать. Çур литр усал шĕвеке вăл 50 тенкĕпе сутнă. 1971 çулта çуралнă, çак ялтах пурăнаканскер, хапăл тусах туяннă. Ку ĕç февралĕн 23-мĕшĕнче 07 сехет те 05 минутра пулса иртнĕ. Çакăнпа аппаланакансен вара пуçĕсене самаях ыраттарма тивĕ. Хальлĕхе пакунлисен ЧР административлă саккунĕн 16 статйипе протокол çырма тивнĕ.

## Хăнан шухăшĕ еплерех?

Вăрмана кăмпа, çырла пуçтарма, унăн илемĕпе киленме каяççĕ. Хăнана вара тăван-пĕлĕшпе ăшшăн калаçма тухаççĕ, анчах та хăшĕ-пĕри урăх тĕллевпе çӳрет. Акă, Пăсăрман ялĕнчи 1962 çулта çуралнă арçын, хăнана усă курас тĕлĕшпе тухкаланă пулас. Февралĕн 20-мĕшĕнче 20 сехетре Муркаш салинчи пĕр хваттере хăнана килмелле пулса тухнă çакскерĕн. Вăр-вар алăллăскер, çывăракан çыннăн куртка кĕсйине вăтанмасăрах кĕрет, 3000 тенкĕ укçа пĕçертет. Халĕ çак кукăр алăллăскер пирки РФ УК 158 статйипе уголовлăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

## Арçынсемех-и эсир?

Арçын чышки никама та тиркемест. Килти хĕрарăма та, урамрине те. Акă, Хорнуй ялĕнчи Сад урамĕнчи 1951 çулта çуралнăскер, хирĕçӳ кăларать. Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн ферма ертӳçине хĕнет. Çак ĕç февралĕн 24-мĕшĕнче 9 сехетре пулса иртет. Халĕ йывăр чышкăллă намăссăр пирки РФ УК 116 статйин 1-мĕш пайĕпе уголовлăй ĕç пуçарас ыйту тăрать. Ун йышшисем чавса çывăх та, çыртма çук тенине аса илекенччĕ-ха.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Йыхрав

## Хурт-хăмăр ĕрчетекенсене пĕлме

Кăçалхи мартăн 20-мĕшĕнче район администрацийĕн ял хуçалăх управленийĕ тата республикăри хурт-хăмăр агентстви агропромышленноç комплексне кĕрекен ял хуçалăх предприятийĕсенчи хурт-хăмăр ĕрчетекенсене тата харпăр хăй килĕсенче вĕллесем тытакансене иртнĕ çулхи ĕçсене пĕтĕмлетме канашлăва чĕнеççĕ. Калаçу çавăн пекех хурт-хăмăра çăва кăларасси тата утарсенчи çуркуннехи ĕçсем çинчен пырĕ.

Канашлу район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕн методика кабинетĕнче 10 сехетре пуçланать.

## Пĕлтерӳсем. Объявления

20 марта с 9 до 11 в РДК
СЛУХОВЫЕ АППАРАТЫ
1500; 1700; 2950; 3150 руб.
и УЛЬТРАЗВУКОВЫЕ
СТИРАЛЬНЫЕ МАШИНКИ по ЦЕНАМ ЗАВОДА
850; 1495; 2150; 2500; 3300 руб.
НОВИНКА - “Антисон за рулем”
ПОДАРОК - каждому! СКИДКИ - пенсионерам!
ЗАЩИТИТЕ СЕБЯ от ПОДДЕЛОК!
ПОКУПАЙТЕ У ОФИЦИАЛЬНОГО ПРЕДСТАВИТЕЛЯ ЗАВОДА
ТРЕБУЙТЕ ГОЛОГРАММУ НА ИЗДЕЛИЯХ!
(3412) 45-58-55, 8-922-682-95-00
www.bionikaplus.ru
Товар сертифицирован

**Фирма «ООО Бионика +» представляет следующую продукцию: слуховые аппараты по ценам завода-изготовителя 1500, 1800, 2950, 3150 и 6000 руб. производства России, Германии, Прибалтики.**

**А также ультразвуковые стиральные машинки порядка 10 моделей по ценам 1200, 1495, 2150, 2500, 3300 руб. производства Смоленска, Кирова, Чистополя, Москвы. Разница по сравнению с другими машинками: малогабаритная машинка, вес всего 200 гр.! Стирает в емкостях любого объема. При любой температуре воды! Просто опустите машинку в таз или ванну, наполненную бельем, и оно будет чистое! Стирает любые, даже габаритные вещи (одеяло, пальто, пуховик и т. д.), а также детское белье. Белье не мнется, не деформируется, нет катышков, можно стирать даже самые деликатные ткани. Экономична, потребляет электроэнергию 3 Вт!!! За 3 часа работы счетчик наматывает всего 4 копейки. Отбеливает белье без кипячения. Очищает ткань внутри волокон, выводит пятна! Дезинфицирует воду, белье, овощи, фрукты. Отпугивает мышей, крыс и других грызунов.**

**У нас действует скидка до 25 % пенсионерам, инвалидам, ветеранам! Застрахуйте себя от подделок - требуйте голограмму на изделиях!!! Покупайте у официального представителя завода!!! Выставка-продажа будет проходить 20 марта с 9 до 11 ч. в РДК.**

**ВАЗ-2106 маркăллă автомобиль сутатăп. Хакĕ - калаçса татăлнă тăрăх. Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Вускасси ялĕнчи И.М. Кудряшовран ыйтмалла.**
**Тел.: 8-927-990-25-13.**

**Продаю корову. Подробнее по телефонам: 2-18-22, 8-906-380-85-65.**

**Продаем пиломатериал: обрезной и необрезной, брус любого сечения, вагонка, блок-хаус (хвоя, осина, береза, дуб). Цены ниже рыночных.**
**Тел.: 8-905-343-11-70. 2-5.**

**Продаю лесопиломатериал. Марий Эл. Документы, чеки предоставляем.**
**Тел.: 8-905-379-01-02. 7-10.**

**ООО «Энергосервис» срочно требуются водитель-профессионал на ГАЗ-53, коммерческий директор.**
**Реализует за наличный и безналичный расчет кольца ж/б для колодцев и выгребных ям. Оказывает услуги по бурению колодцев и установки ж/б колец.**
**Тел.: 2-15-86, 8-905-342-98-11.**

**Приглашаем принять долевое участие в строительстве 36-иквартирного жилого дома в д. Москакасы Моргаушского района ЧР.**
**Стоимость 1 кв. м. жилой площади – 17800 руб.**
**Обращаться в ЗАО «МСО «Моргаушская» по адресу: 429551, ЧР, Моргаушский р-н, д. Юнгапоси.**
**Тел.: 32-2-23, 2-21-29, 2-21-19. 1-3.**

**Срочно требуется тракторист-экскаваторщик. Оплата высокая.**
**Обращаться по телефону: 2-13-74.**

Муркашри тĕп больница коллективĕ кунта хирург пулса ĕçлекен С.М. Васильевăн ашшĕ, С.П. Васильеван хуньашшĕ

**Михаил Семенович ВАСИЛЬЕВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркашри вăтам шкул коллективĕ кунта нумай çул математика учителĕнче ĕçленĕ

**Михаил Семенович ВАСИЛЬЕВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3552.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 16.03.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан (вкладыши - в ГУП “Моргаушский издательский дом”) в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.